Тыткăнра

Венгри çĕрĕ улăхлă,

Çуллахи кун шăрăхлă...

Тыткăнри çын, ют салтак,

Çав шăрăхра айлашать,

Мĕн те пулин чавалать.

Çурхи вĕри вăрăм кун

Ĕçлет мĕскĕн халсăр чун

Хапрăк-савăт çумĕнче,

Е пит вĕри шахтăра,

Аякри ют çĕршывра.

Çиме начар панăран,

Ĕçĕ ытла йывăртан

Тыткăнри çын тӳсеймест:

Вăй-хал кайса вăл чирлет,

Хĕн-хур курать е вилет.

Мадьяр-нимĕç салтаксем —

Хăйсем ăслă этемсем,

Çавах та çав сисмеççĕ:

Епле хăйсем пек çынах

Пĕтет çапла кăлăхах!

*Элкер, С. Тыткăнра : [сăвă] // Элкер, С. В. Çырнисене пухса кăларни : 5 томпа тухать / С. В. Элкер. – Шупашкар, 1960. - 1 том : Сăвăсемпе поэмăсем. - С. 58.*